3570 44-8

С. С. ЯГУНОВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

I

ПАЙĔ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1944

С. С. ЯГУНОВ

3570

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

I-МĔШ ПАЙĔ

ПУÇЛАМĔШ ШКУЛĂН ПĔРРЕМĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ

*Чăваш АССР Çутĕç халăх комиссариачĕ çирĕплетнĕ*

УЛТТĂМĔШ ИЗДАНИ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1944

# 1 §. Малтанхи хăнăхтарусем.

***1-мĕш задача.*** Çак сăмахсене вуласа тухăр:

*лаша, перо, çăмха, кĕнеке, линейка, пукане.*

Вăл сăмахсене картинкăсем ӳкернĕ йĕркепе çырса илĕр.



***2-мĕш задача.*** 1-мĕш задачăри сăмахсене тата тепĕр хут çак йĕркепе çырса илĕр: малтан **вĕренмелли япаласен ячĕсене,** унтан **вылямалли япаласен ячĕсене.**

*Вĕренмелли япаласем: .....*
*Вылямалли япаласем: ......*

*3-мӗш задача.* Картинкӑсем ӳкерӗр те вӗсен айне ячӗсене ҫырӑр:

*тенкел, йывӑҫ, чӳрече, витре, мӑлатук, ҫурла.*

***4-мӗш задача.*** Сӗтел-пукан ячӗсене ҫакӑнта ӳкернӗ картинкӑсен йӗркипе ҫырса илӗр:



*хыҫлӑ пукан, сӗтел, арча, тенкел, кровать, шкап.*

***5-мӗш задача.*** Савӑт-сапа ячӗсене ҫакӑнта ӳкернӗ йӗркепе ҫырса илӗр:

*чашӑк, хуран, чӳлмек, ҫӗҫӗ, чейник, кашӑк, стакан, вилка.*



***6-мӗш задача.*** Выльӑх-чӗрлӗх ячӗсемпе тискер кайӑксен ячӗсене ҫакӑнта ӳкернӗ йӗркепе ҫырса илӗр:



*тилӗ, кашкӑр, кушак,*
*йытӑ, ӗне, мулкач, така,*
*упа, лаша, сысна, качака*

*7-мӗш задача.* 6-мӗш задачӑри сӑмахсене ҫак йӗркепе ҫырса илӗр:

Тискер кайӑксем: . . . . . . . .
Килти выльӑхсем: . . . . . . . .

*8-мӗш задача.* Тумтир ячӗсене ҫакӑнта ӳкернӗ йӗркепе ҫырса илӗр:



пальто, кӑҫатӑ, пушмак,
атӑ, тӑлӑп, ҫӗлӗк, калуш,
картус, шлепке.

*9-мӗш задача.* Ҫак сӑмахсене вулӑр:

ҫӑмха, коньки, йӗлтӗр, ҫуна,
урапа, ҫунашка.

Хӗлле кирлӗ япаласене тата ҫулла кирлӗ япаласене уйрӑммӑн ҫырӑр.

*Хӗлле кирлӗ япаласем: . . . .*
*Ҫулла кирлӗ япаласем: . . . .*

***10-мӗш задача.*** Вӗҫен кайӑк ячӗсене ҫак йӗркепе ҫырса илӗр:

*Килти кайӑксем: . . . . . . . . .*
*Ирӗкри вӗҫен кайӑксем: . . . . .*



***11-мӗш задача.*** Картинкӑсене пӑхса, кам мӗн ӗҫленине ҫырӑр.



Вутă çуракан . . . . Çĕвĕçĕ . . . . Вĕренекен . . . . Утă çулакан . . . . Столяр . . . .

Кирлĕ сăмахсем: *çулать, шутлать, вутă çурать, татать, çĕлет.*

Тĕслĕх: *Вутă çуракан вутă çурать.*

## 2 §. Предложени.

***12-мĕш задача.*** Малтан **ача** çинчен, унтан **столяр** çинчен, кайран **тимĕрçĕ** çинчен каланине вуласа тухăр. Унтан мĕн вуланине çырса илĕр.



*Ача вулать.*
*Столяр савалать.*
*Тимĕрçĕ туптать.*

*13-мӗш задача.* Сулахай енчи сӑмахсемпе сылтӑм енчи сӑмахсене, пӗр-пӗринпе майлаштарса, кӑтартнӑ пек çырӑр.

Тӗслӗх: *Йытӑ вӗрет.*

| | |
|---|---|
| Йытӑ | вӗçет |
| Кайӑк | вӗрет |
| Пулӑ | калаçать |
| Çын | мӗкӗрет |
| Лаша | кӗçенет |
| Ӗне | ишет |

*14-мӗш задача.* 13-мӗш задачӑри пекех туса çырӑр.

Тӗслӗх: *Хӑяр симӗс.*




Хӑяр... Сухан...
Сахӑр... Купӑста...
Çарӑк... Помидор...

Кирлӗ сӑмахсем: *симӗс, йӳçӗ, шурӑ, сарӑ, хӗрлӗ, пылак.*

*15-мӗш задача.* Картинкӑсем тӑрӑх йӗркелесе, предложенисем çырса илӗр.

*Анне чӳрече ҫӑвать.*
*Анне чӳрече ҫӑвать.*
*Йӑмӑк юртан кӗлетке тӑвать.*



***16-мӗш задача.*** Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Точка тӗлӗнче чарӑнса тӑрӑр.

Точка умӗнчи сӑмах ҫинче сасӑ анать. Шухӑш ӑҫта пӗтни сасӑран палӑрать.

## Мӗнле ҫӳреҫҫӗ.

Пулӑ ишет. Хурт шӑвать. Курак вӗҫет. Шӑрчӑк сикет. Лаша чупать. Ӗне утать. Самолётпа вӗҫеҫҫӗ. Кимӗпе ишеҫҫӗ.

Пулӑ ишет тенинче миҫе сӑмах? Пӗтӗмпе кунта миҫе предложени? Предложени хыҫҫӑн мӗн лартнӑ? Предложенисене мӗнле саспаллипе пуҫласа ҫырнӑ?

***17-мӗш задача.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Ыйтусем вырӑнне кирлӗ сӑмахсене ҫырӑр.

Тӗслӗх: *Ҫӗвӗҫӗ йӗппе ҫӗлет.*
Ҫӗвӗҫӗ (*мӗнпе?*) ҫӗлет.
Тимӗрҫӗ (*мӗнпе?*) туптать.

Вутă çуракан (*мĕнпе?*) çурать.
Вĕренекен (*мĕнпе?*) сырать.
Тракторист (*мĕнпе?*) сухалать.

Кирлĕ сăмахсем: *Тракторпа, пуртăпа, мăлатукпа, йĕппе, карандашпа.*

***18-мĕш задача.*** 17-мĕш задачăри пекех тăвăр.

Çĕвĕçĕ (*мĕн?*) çĕлет.
Тимĕрçĕ (*мĕн?*) туптать.
Вутă çуракан (*мĕн?*) çурать.
Вĕренекен (*мĕн?*) çырать.
Тракторист (*мĕн?*) сухалать.

Кирлĕ сăмахсем: *кĕпе, çыру, вутă, çĕр, çава.*

***19-мĕш задача.*** Сулахай енчи сăмахсемпе сылтăм енчи сăмахсене кирлĕ пек çыхăнтарăр та мĕн ăçта ӳснине çырăр.

Тĕслĕх: *Мăйăр вăрманта пулать.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ыраш | (*ăçта?*) | ӳсет. | уйра |
| Çарăк | (*ăçта?*) | ӳсет. | вăрманта |
| Панулми | (*ăçта?*) | пулать. | улăхра |
| Юман | (*ăçта?*) | ӳсет. | пахчара |
| Утă | (*ăçта?*) | ӳсет. | садра |

***20-мĕш задача.*** а) **Кĕр** тата **хĕл** çинчен каланă предложенисене вуласа тухăр.

б) **Тăман** çинчен, **пас** çинчен, **çĕр** çинчен, **çуна тупанĕ** çинчен каланă предложенисене çырса илĕр.

## Кĕр.

Çумăр çăвать.
Çĕр нӳрелет.
Кураксем вĕçсе
каяççĕ.
Хир пушанса юлать.

## Хĕл.

Çырмара пăр.
Пас йăлтăртататать.
Çуна тупанĕ чăкăр-
татать.
Тăман вĕçтерет.

*21-мĕш задача.* Картинкăсем çине пăхăр та лаша мĕн туни çинчен тата ĕне мĕн туни çинчен калăр, унтан çырăр. Çырса пĕтерсен точка лартăр.





*22-мĕш задача.* Çак статьяна вуласа парăр. Кашни предложение вуланă хыççăн кăшт чарăнса тăрăр. Вуланă статьяран предложенисене çакăн пек йĕркепе çырса илĕр: малтан икĕ сăмахлă предложенисене, унтан виçĕ сăмахлă предложенисене, кайран пилĕк сăмахлă предложенисене çырса илĕр.

## Хĕлле.

Хĕвел сахал ăшăтать. Шывсем шăнса ларнă. Пур çĕрте те шурă юр. Сивĕтет аванах. Час-часах тăман вĕçтерет. Çынсем ăшă тумтир тăхăнса çӳреççĕ.

*23-мĕш задача.* Малтан **хĕл** çинчен каланă предложенисене, унтан **çу** çинчен каланă предложенисене çырса илĕр.

Сивĕсем пуçланчĕç. Ачасем тăвайкки çине шыв сапаççĕ. Çырмасем шăнса ларнă. Пуç тăрринче тăри юрлать. Хирсенче тырăсем пуçтараççĕ.

*24-мĕш задача.* Çак предложенисене сасăпа вуласа тухăр. Предложенисенче миçешер сăмах? Малтанхи предложенире хăш сăмах çинче сасă анать? Иккĕмĕш предложенире? Виççĕмĕшĕнче? Тăваттăмĕшĕнче?



1. Ачасем шкулта.
2. Ачасем шкулта вĕренеççĕ.
3. Ачасем шкулта вулаççĕ, çыраççĕ.
4. Ачасем шкулта вулаççĕ, шутлаççĕ, çыраççĕ.

*25-мĕш задача.* Ҫак предложенисене вуласа тухăр, унтан вĕсене ҫырса илĕр. Хăш сăмаха калнă чухне сасă анать, ҫавна аялтан пĕр йĕрпе туртăр.

Предложени вĕҫĕнче сасă аннине асăрхăр.



Пӳртре кăмака. Кăмакана вут хутаҫҫĕ. Кăмакаран ăшă тухать. Кăмакара апатҫимĕҫ пĕҫереҫҫĕ.

*26-мĕш задача.* Ҫак статьяна лайăх вуласа тухăр. Предложени вĕҫĕнче сасă аннине асăрхăр, унта кăшт чарăнса тăрăр.

## Хĕллехи каҫ.

Ҫанталăк уяр. Пĕлĕт тап-таса. Йĕри-тавра шурă юр. Пĕлĕт ҫинче ҫăлтăрсем йăлтăртатаҫҫĕ. Хăлхана сивĕ чĕпĕтет. Аслă ҫулпа лавсем пыраҫҫĕ. Ҫынсем ҫуна хыҫҫăн утса пыраҫҫĕ.

Предложени хыҫҫӑн точка лартаҫҫӗ. Предложение пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫыраҫҫӗ.

## 3 §. Предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ.

***27-мӗш задача.*** Ҫак сӑмахсене, аялти кирлӗ сӑмахсемпе тӗрӗс ҫыхӑнтарса, предложенисем тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Рабочи ӗҫлет.*

Рабочи.... Эпӗ.... Эпир.... Шкулта ачасем.... Вӗренекенсем задача....

Кирлӗ сӑмахсем: *ӗҫлет, ҫыратӑп, вулатпӑр, вӗренеҫҫӗ, шутлаҫҫӗ.*

***28-мӗш задача.*** Ҫырса пӗтермен сӑмахсен вӗҫӗсене тупса ҫырӑр.

Тӗслӗх: *Эпӗ шкулта вӗренетӗп.*

Эпӗ шкул... вӗренетӗп. Уроксем хыҫҫӑн кил... таврӑнатӑп. Кил... кӗнеке вулатӑп. Шӑллӑм урам... вылять.

***29-мӗш задача.*** Ҫырса пӗтермен сӑмахсен вӗҫӗсене тупса предложенисем туса вулӑр.

### Лаша пӑхакан.

Иван лашасем пӑхать. Вӑл вӗсе... апат парать, вӑхӑт... шӑварать. Вӑл лашасем тӑракан вите... таса, ӑшӑ тытать. Вӑл лаши... кулленех тасатать.

*30-мӗш задача.* Предложенисене ҫырса илнӗ чухне аялта ҫырнӑ сӑмахсене точкӑсем вырӑнне кӳртсе лартӑр.

Пионерсем хӑйсен (...) пухӑнчӗҫ. Пионерсем (...) вӑхӑта аван ирттереҫҫӗ. Вожатый (...) питӗ юрататать, (...) те вожатӑя юратаҫҫӗ. Вӗсем вожатый каланине аван итлеҫҫӗ.

Кирлӗ сӑмахсем: *пионерсене*, *пионерсем*, *сборне*, *сборта.*









*31-мӗш задача.* Ҫак картинкӑсенче мӗн ӳкернине каласа парӑр.

*32-мӗш задача.* Кирлӗ сӑмахсене хӑйсен вырӑнне кӳртсе лартса, ҫак предложенисене ҫырса илӗр.

Вăйлă ... вĕрет. Вĕренекен ... каять. Ун хыççăн ... чупса пырать. Вĕренекен ... тата ... тăхăннă. Вăл ... йăтса пырать.

Кирлĕ сăмахсем: *йытă, çил, кăçатă, пальто, сумка, шкула.*

***33-мĕш задача.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Вĕсене картинкăсем ÿкернĕ йĕркепе çырса илĕр. Точкăсем лартма тата пысăк саспаллисем çырма ан манăр.



Пĕр улакуракĕ йытта хÿринчен сăхса илнĕ. Тепĕр улакуракĕ ашне хыпса илнĕ. Икĕ улакурак вĕççе пынă. Йытă аш татăкне çиме тытăннă. Икĕ улакуракĕ те вĕççе тарнă.

## 4 §. Сăмахсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси.

***34-мĕш задача.*** Малтан арçын ача ячĕсене, унтан хĕрача ячĕсене çырса илĕр.

*Илюш, Ванюк, Павăл, Якку, Петя, Ольга, Вера, Кĕркури, Максăм, Варвари, Антун, Анна, Лиза, Шура, Зина, Эрхип, Наçтуç.*

***35-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр, унтан çырса илĕр.

### Тăвайкки ярăнни.



Нина, Миша тата Коля пĕр килте пурăнаççĕ. Мишăпа Коля тăвайкки тунă. Вĕсем патне Нина пынă. Вĕсем виççĕшĕ те ярăннă.

***36-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Унтан ăна каласа парăр.

# Микула шыва кайни.

Микула пăр çинче ярăннă. Вăл çӳхе пăр çине кĕнĕ. Сасартăк пăр çурăлса кайнă. Микула шыва кĕрсе ӳкнĕ. Çакна Петĕрпе Вася курнă. Петĕрпе Вася Микулана шывран туртса кăларнă.

***37-мĕш задача.*** Портретсем айĕнчи ятсене тетрадьсем çине çырса илĕр.



Владимир Ильич Ленин.



Иосиф Виссарионович Сталин.



Вячеслав Михайлович Молотов.



Михаил Иванович Калинин.



Климент Ефремович Ворошилов.

*38-мӗш задача.* Точкӑсем вырӑнне ҫын ячӗсене ҫырӑр. Ятсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырӑр.

Эпӗ . . . ятлӑ. Манӑн аттене . . . тесе чӗнеҫҫӗ. Манӑн аппа . . . ятлӑ. Манӑн юлташсем . . . , . . . , . . . ятлӑ.

**Ҫын ячӗсене, хушамачӗсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫыраҫҫӗ.**

*39-мӗш задача.* Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Ҫын ячӗсене тетрадьсем ҫине ҫырса илӗр.

Илюш пиччесен Верукӗ шкула пӗр кун сиктермесӗр ҫӳрет. Верук уроксене яланах лайӑх хатӗрленет. Верукпа Зина лайӑх вӗренеҫҫӗ. Вӗсене кура, Виктор, Петӗр, Урине, Пурис, Санюк та тӑрӑшса вӗренме тытӑнчӗҫ. Паян эпир Совет Союзӗн маршалӗсен—Семен Михайлович Будённыйпа Семен Константинович Тимошенко пурӑнӑҫӗ ҫинчен вуларӑмӑр.

*40-мӗш задача.* Хӑвӑр юлташӑрсен ячӗсене ҫырӑр.

*41-мӗш задача.* Малтан хула ячӗсене, унтан ял ячӗсене, юлашкинчен шыв ячӗсене ҫырса илӗр.

Мускав хули, Шемшер ялӗ, Атӑл шывӗ, Шупашкар хули, Ленинград хули, Ҫавал шывӗ, Ульяновск хули, Улатӑр хули, Сӑрӑ шывӗ, Ҫӗрпӳ хули, Канаш хули, Энӗш шывӗ, Етӗрне хули, Тӑвай ялӗ, Элӗк ялӗ.

***42-мӗш задача.*** Предложенисене çырса илнӗ чухне точкăсем вырăнне хула е ял ячӗсене кӗртсе лартăр.

Эпир . . . ялӗнче (хулинче) пурăнатпăр. Пиртен инçех мар . . . хули пур. Эпир аттепе . . . хулинче пултăмăр. Эпӗ çитӗнсессӗн . . . хулине вӗренме каятăп.

> Ял, хула, шыв ячӗсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççӗ.

***43-мӗш задача.*** Хăвăр пӗлекен ялсен, хуласен, шывсен ячӗсене çырăр.

Эпӗ пӗлекен ялсем: . . . . . . . . .
Эпӗ пӗлекен шывсем: . . . . . . . .
Эпӗ пӗлекен хуласем: . . . . . . .

***44-мӗш задача.*** Малтан колхоз ячӗсене, унтан завод ячӗсене çырса илӗр.

„Октябрь“ колхоз, „Динамо“ завод, „Большевик“ завод, „Ударник“ колхоз, „Трактор“ колхоз, „Комбайн“ колхоз, „Малалла“ колхоз.

> Колхоз, завод ячӗсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççӗ.

***45-мӗш задача.*** Çак йытă ячӗсене çырса илӗр.

Улай, Эскам, Кампур, Полкан, Шарик, Дружок, Трезор, Волчок.

*46-мĕш задача.* Хăвăр колхозри лаша ячĕсене çырăр.

Тĕслĕх: *Пирĕн колхозри лашасем:* ***Машка, Сивка.***

> Тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсене уйрăм ятпа чĕнеç-çĕ пулсан, вĕсен ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

## 5 §. Сасă. Алфавит.

*47-мĕш задача.* Çак сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр.

ака, алă, ăса, эпĕ, эсĕ, ура.

Çак сăмахсен пирвайхи сыпăкĕсене уйрăм çырса илĕр. Вăл сыпăксене вулăр. *А, ă у, э* сыпăксене уйăрма пулать-и?

Иккĕмĕш сыпăксене çырса илĕр. ***Ка*** сыпăка уйăрма пулать-и? ***лă*** сыпăка уйăрма пулать-и? ***са*** сыпăкпа ***ка*** сыпăкăн пĕр пек сасă пур-и? ***пĕ*** сыпăкпа ***сĕ*** сыпăкăн пĕр пек сасă пур-и? Мĕнле сасăсем вĕсем? Мĕнле сасăсем уйрăм?

*48-мĕш задача.* Çак предложенисене çырса илнĕ чухне точкăсем выраннне сасăсен паллисене çырăр.

Тĕслĕх: *Çил ууу улать.*

Çил . . . улать. Çĕлен . . . тет. Хур . . . тет. Йытă . . . тăвать.

(*шшш . . ., ууу . . ., ррр . . ., ссс . . .*)

*49-мĕш задача.* Çак сăмахсене вулăр. Кашни йĕркере пур сăмахра та тĕл пулакан сасăсене тупăр. Çав сасăсене çырăр.

1. Алăк, кашăк, кăмака, алă, таса.
2. Тăвар, çăкăр, тутлă, шурă, кăвак.
3. Çахăр, таса, сехет, сарă, сасă.
4. Йӳçĕ, тӳрĕ, ĕнер, ĕмĕр, ĕне.

**Сăмахра темиçе сасă пулать. Сасса саспаллипе паллă тăваççĕ.**

А с ă р х ă р: Сасса чĕлхе-çăварпа калатпăр, хăлхапа илтетпĕр.

Саспаллине алăпа çыратпăр, куçпа куратпăр.

***50-мĕш задача.*** Çак сăмахсене мăшăрăн-мăшăрăн танлаштарăр. Вĕсенче мĕнле сасăсем пĕр пек, мĕнле сасăсем урăхла?

| | | | |
|---|---|---|---|
| ала | тура | курак | тĕп |
| ула | пура | курăк | туп |
| хула | хур | тат | тĕлĕк |
| хулă | хура | тыт | çĕлĕк |
| тилĕ | хуран | суран | тупать |
| килĕ | хурăн | çуран | чупать |

***51-мĕш задача.*** Çак сăмахсене çырса илĕр. Унтан вĕсемпе юнашар çав сăмахсенех *с* вырăнне *ç* лартса çырăр; вĕсем урăх сăмах пулнине асăрхăр.

Т ĕ с л ĕ х: *кас—каç, пус—пуç, сап—çап.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| сапла—... | сĕр —... | сыхă—... | сĕт—... |
| сăмах—... | сăтăр—... | сыр —... | сис—... |
| симĕс—... | сӳре —... | сут —... | сул—... |

***52-мĕш задача.*** Алфавита тетрадьсем çине çырса илĕр. Унтан ик-виçĕ хут вуласа тухăр.

Чăваш чĕлхинче мĕн пурĕ 37 саспалли. Вĕсен алфавитла йĕрки çакăн пек:

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Аа | Ăă | Бб | Вв | Гг | Дд | Ее | Ёё |
| Ĕĕ | Жж | Зз | Ии | Йй | Кк | Лл | Мм |
| Нн | Оо | Пп | Рр | Сс | Çç | Тт | |
| Уу | Ӳӳ | Фф | Хх | Цц | Чч | Шш | |
| Щщ | ъ | Ыы | ь | Ээ | Юю | Яя | |

***53-мĕш задача.*** ***А, у, э, и, ы, й, н, п, к, х, с*** сасăсене уйрăм каласа пăхăр. Хăш сасăсене каланă чухне çăвара ытларах уçатпăр? Хăш сасăсене каланă чухне сахалтарах уçатпăр.

***А, ă, э, ĕ, и, у, ӳ, о, ы, е, ё, ю, я***—уçă саспаллисем.

***Б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м, н, п, р, с, ç, т, ф, х, ц, ч, ш, щ***— хупă саспаллисем.

***54-мĕш задача.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Унтан ăна çырса илĕр те уçă саспаллисене аялтан туртăр.

## Тырă лайăх пултăр тесен.

Тырă лайăх пултăр тесен, анасене кĕркуннех сухаласа хăвармалла. Акана вăхăтра тумалла. Лайăх сухаласа сӳремелле. Таса вăрлăх акмалла. Çумсене пĕтермелле.

# 6 §. Сӑмах сыпӑкӗсем. Сӑмаха пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куçарасси.



Ку-кук! Ка-ка-ка! Ки-ки-рук! Как!

***55-мӗш задача.*** Çак сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн уйӑрса вулӑр:

| | | | |
|---|---|---|---|
| сӑмах | кӗнеке | пионер | вӗренекен |
| арман | кӑмака | колхоз | карандаш |
| кушак | журнал | илтӗнет | революци |

**Арман** сӑмаха каланӑ чух эпир çӑвара миçе хут уçатпӑр? **Кӗнеке** сӑмаха каланӑ чух? **Вӗренекен** сӑмаха каланӑ чух?

***56-мӗш задача.*** **Кӑвакарчӑн** сӑмаха тӑсса, сыпӑкӑн-сыпӑкӑн калӑр. Çак сӑмахра миçе сыпӑк? Малтанхи сыпӑкӗ мӗнле? Иккӗмӗшӗ? Виççӗмӗшӗ? Тӑваттӑмӑшӗ? Çак сӑмахӑн сыпӑкӗсене кӗске йӗрпе уйӑрса çырӑр. Кашни сыпӑкӗнче миçе уçӑ сасӑ? Уçӑ сасӑсӑр пӗр сыпӑк та пулин пур-и?

Çавӑн пекех **машина, вӗрене, пӗрене** сӑмахсене те уйӑрӑр.

***57-мӗш задача.*** Çак сӑмахсене çырса илӗр. Çырса илнӗ чухне сӑмахсене кӗске йӗрпе сыпӑкӑн-сыпӑкӑн уйӑрӑр. Хӑш сӑмах миçе сыпӑка пайланнине асӑрхӑр.

Тӗслӗх: *пе-ро, ла-ша, су-рӑх, кӑ-ма-ка.*

Колхоз, ыраш, колхозник, ак, выр, лар,

тăр; Анна, Ваня, Миша, Петя, пионер, комсомолец, большевик, ударник, отличник.

> Сăмаха темиçе пая уйăрма пулать. Сăмах пайне **_сыпăк_** теççĕ.
>
> Сăмахра миçе уçă саса, çавăн чухлĕ сыпăк пулать.

Ак, выр, лар—пĕр сыпăклă сăмахсем.

Тырă, лаша—ик сыпăклă сăмахсем.

Çĕрулми, пионер, миномёт—виç сыпăклă сăмахсем.

Комсомолец—нумай сыпăклă сăмах.

*58-мĕш задача.* Çак сăмахсен çитмен сыпăкĕсене тупса çырăр, вĕсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр.

## Вĕçен кайăксем.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ку- ... | Те-кер-.. | Çер- ... | Кă-си ... |
| Шăп- ... | . . .-рăш | Кук- ... | . . .-хан |
| Кă-ва-... | . . .-ка | Тăр- ... | . . .-чăка |

*(кăвакал, çерçи, хурчăка, шăпчăк, тăрна, куккук, курак, чавка, текерлĕк, çăхан, кăсия, карăш).*

*59-мĕш задича.* Ятсене çак йĕркепе çырса илĕр: малтан пĕр сыпăклисене, унтан икĕ сыпăклисене, юлашкинчен виçĕ сыпăклисене.

Иван, Зоя, Сергей, Нил, Микула, Ваня, Ваçук, Коля, Элекçи, Ехрим, Роман, Зина.

*60-мĕш задача.* Уйрăм сыпăксене çыпăçтарса, сăмахсем тăвăр. Çĕнĕрен пулнă сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса çырăр.

Ту, Су, Ху, Пу — лă

ка — рас, йăк, шăк, пан

Чӳ, Пĕ, Сĕ, Кĕ — ре — че, не, ке, çе

кур, вула, кай, çыр — ка — ла, ла, ла, ла

*61-мĕш задача. Па, ку, та, пу, кĕ, çу* сыпăксемпе пуçланакан сăмахсем тупăр.

*62-мĕш задача.* Çак сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн çырса илĕр.

Тĕслĕх: *Ан-не, тă-ри.*

Анне, тăри, вăрман, çаран, кашкăр, кăшман, çеçпĕл, кăркка, пулемёт, миномёт.

*63-мĕш задача.* Çак сăвва çырса илĕр. Çырса илнĕ чух сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр. Унтан сăввине пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Ворошилов патне янă çыру.

Çыру çыртăм эпĕ
Ворошилов патне:
«Юлташ Ворошилов,
Халăх комиссарĕ!

Пысăк телей килчĕ
Пирĕн çемьене:
Хĕрлĕ Çара илчĕç
Манăн пиччене...»

*64-мӗш задача.* Сӑмахсене епле куçармаллине кӑтартса парӑр.

Тӗслӗх: *са-молёт, само-лёт; вӗ-ре-некен, вӗре-некен, вӗрене-кен.*

Купӑста. Кишӗр. Хӑяр. Улма. Сухан. Кавӑн. Çарӑк. Панулми. Кӗтмел. Хурлӑхан. Пӗрлӗхен. Винтовка. Автомат.

## 7 §. Хытӑ тата çемçе уçӑ сасӑсем.

*65-мӗш задача.* Çак уçӑ сасӑсене каласа парӑр: *а, ӑ, э, ӗ, ы, и, у, ӳ, о.*

***Ы*** сасӑпа ***И*** сасса танлаштарса пӑхӑр: хӑшӗ хытӑрах, хӑшӗ çемçерех илтӗнет? ***А*** сасӑпа ***ӗ*** сасса, ***у*** сасӑпа ***ӳ*** сасса танлаштарса пӑхӑр: вӗсенчен хӑшӗ хытӑрах, хӑшӗ çемçерех илтӗнет?

| |
|---|
| Хытӑ уçӑ сасӑсем: *а, ӑ, у, ы, о.*<br>Çемçе уçӑ сасӑсем: *э (е), ӗ, и, ӳ..* |

Кусемсӗр пусне ***й***-па пӗрлешнӗ (йотованнӑй) уçӑ саспаллисем пур: ***е*** (йе), ***ё*** (йо), ***ю*** (йу), ***я*** (йа).

Вӗсенчен ***е*** (йе)—çемçе уçӑ саспалли, ***ё*** (йо), ***ю*** (йу), ***я*** (йа)—хытӑ уçӑ саспаллисем.

Уçӑ сасӑсене çырса илӗр: ***а, ӑ э, ӗ, и, у, ӳ, о, ы.***

*66-мӗш задача.* Çак сӑмахсене çырса илӗр. Хытӑ уçӑ саспаллисене аялтан туртӑр.

Хут, кашӑк, картина, кушак, парта, танк, тулӑ, урпа, пӑри, ыраш, урапа, Шупашкар, Канаш, Хусан, Мускав.

*67-мӗш задача.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Хытӑ уҫӑ саспаллисене пӗр йӗрпе, ҫемҫе уҫӑ саспаллисене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.

## Колхозра.

Хӗвел хӗрелсе тухрӗ. Колхозниксем ӗҫе кайма хатӗрленеҫҫӗ. Колхозра тырӑ ҫулленех вӑйлӑ пулать. Выльӑх-чӗрлӗх ӑратлӑ, шултӑра. Колхозниксен ҫурчӗсем тирпейлӗ, таса.

*Таса, тырӑ, вӑйлӑ*—хытӑ уҫӑ сасӑллӑ сӑмахсем. *Хӗвел, ӗҫе, хӗрелсе*—ҫемҫе уҫӑ сасӑллӑ сӑмахсем.

# 8 §. Ҫемҫетекен паллӑ (ь) ҫырасси.

*68-мӗш задача.* Ҫак сӑмахсене ҫырса илӗр. Вӗсен вӗҫӗсем мӗнле илтӗннине асӑрхӑр.

| | | |
|---|---|---|
| курать | тӑрать | мӑкӑнь |
| кӳрет | тӗрет | хӗрен |
| пулать | ҫӑрать | супӑнь |
| пӳлет | ҫӗрет | йӗтӗн |
| сурать | хӑрать | кукӑль |
| сӳрет | хӗрет | ҫекӗл |

*А, я, ӑ, у* сасӑллӑ сыпӑксенче (*ь*) ҫыраҫҫӗ. Ҫакӑн пек сасӑллӑ сыпӑксенче ҫемҫетмелли паллӑ (*ь*) ҫырмасан, урӑх сӑмах пулать: турать—турат, сурать—сурат, анать—анат, канать—канат.

Тĕслĕхсем:

Йывăçăн турат пур.

Хирте сурат нумай.

Пирĕн шкул ялăн
анат вĕçĕнче.

Кайăкăн çунат пур.

Сӳсрен явнă канат
çирĕп.

Анне купăста
туратьь.

Суран суратьь.

Туран пароход
анатьь

Типĕ вутă лайăх
çунатьь.

Çул çӳрекен ларса
канатьь.

Çемçетекен паллă (ь) сăмах вĕçĕнчи е сăмах варринчи хупă сасă çемçине кăтартать.

***69мĕш задача.*** Çак сăвва çырса илĕр. **Ь** палла аялтан туртăр.

## Çуркунне пуçланни.

Йăлтăртатать сар хĕвел,
кунран кунах ăшăтать.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
çур ăшшине парăнать.

Пур çĕрте те шурă юр
хĕвелпеле пусăрнать.
Пĕчĕккĕнех çуна çуль
навусланать, хуралать.

***70-мĕш задача.*** Тетрадьсем çине çулталăк хушшинчи уйăх ячĕсене йĕркипе çырса илĕр. **Ь** палла аялтан пĕр йĕрпе туртăр.

Январь, февраль, март, апрель, май, июнь, июль, август, сентябрь, октябрь, ноябрь, декабрь.

***71-мĕш задача.*** Çак тупмалли юмахсене çырса илĕр. **Ь** паллăллă сăмахсене аялтан туртăр.



Куçне чарнă ларать,
Темĕнле калаçать,
Пăрça пек сикет,
Этемле ишет.

Хăй хуралçă мар—
Пурне те ир
вăрататать.

***72-мĕш задача.*** Çак сăмахсене тĕслĕхре кăтартнă пек улăштарса çырăр.

Тĕслĕх: *кай—каять.*

| | | |
|---|---|---|
| кай- . . . | выля- . . . | уç- . . . |
| çыр- . . . | кур- . . . | хăвала . . . |
| вула. . . . | пăр- . . . | сăв- . . . |

*73-мӗш задача.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. **Ь** паллӑллӑ сӑмахсене аялтан пӗр йӗрпе туртӑр.

Пирӗн колхозра выльӑх ӑратлӑ. Тихасене Улькка пӑхать. Хӗлле эпӗ конькипе ярӑнатӑп. Халь эпӗ шкулта вӗренетӗп. Шӑллӑм урамра вылять, юртан кӗлетке тӑвать.

*74-мӗш задача.* Ҫакӑнта ҫырнӑ предложенисене ҫырса илӗр. Сӑмах вӗҫӗнче точка вырӑнне ***ать*** е ***ет*** ҫырӑр.

Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юх..., шӑнкӑрч чӗппи шыв ӗҫ... Уй-хирсенче тыр кашл..., халӑх чӗри савӑн..... Ҫырма юх... кӗрлесе, юрӑ юрланӑн туйӑн.... Ешӗл курӑк ӑшӗнче сап-сарӑ чечек ӳс....

---

***Юхать, ларать*** йышши хытӑ уҫӑ сасӑллӑ сӑмахсен вӗҫӗнче ***т*** хыҫҫӑн ***ь*** ҫыраҫҫӗ.

***Ӗҫет, ӳсет*** йышши ҫемҫе уҫӑ сасӑллӑ сӑмахсен вӗҫӗнче ***т*** хыҫҫӑн ***ь*** ҫырмаҫҫӗ.

---

*75-мӗш задача.* Точка вырӑнне ***мать, мет*** сыпӑк ҫырӑр.

Выльӑх калаҫ..., чӗрӗп хытӑ утай..., ылттӑн хӗвел курӑн..., вӗрипеле пӗҫерт..., хурт-кӑпшанкӑ хӗвӗш..., тарса пытаннӑ хӗллене. Шӑтӑк-ҫурӑка питӗрмесен, пӳрт ӑшӑ пул...

*76-мӗш задача.* Тунине пӗлтерекен сӑмахпа юнашарах туманнине пӗлтерекен сӑмах ҫырӑр.

Тĕслĕх: *çырать—çырмасть.*

| | | |
|---|---|---|
| çырать-... | тултарать-... | каять-... |
| çыпăçать-... | ӳкет-... | вулать-... |
| тăхăнать-... | илет-... | хисеплет-... |
| пăхать-... | килет-... | юрлать-... |

*масть* сыпăкра *т* хыççăн *ь* çыраççĕ,
*мест* сыпăкра *т* хыççăн *ь* çырмаççĕ.

*77-мĕш задача.* Предложенисем çырса парăр. Вăл предложенисенче çак сăмахсем пулччăр:

Пăхать, шутлать, вулать, каять, каймасть, выртать, вылять, тытать.

## 9. *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене çырасси.

*78-мĕш задача.* Аялта çырнă сăмахсене çырса илĕр.

*Белов, колхоз, телефон, революци, Зайцев, звонок, август, килограмм, букварь, республика, Давыдов, радио, грузовик, ещёк, журнал.*

***79-мӗш задача.*** Малалли сӑмахсене ҫапла уйӑрса ҫырса илӗр:

1. Хула ячӗсем:
2. Ҫын ларса ҫӳрекен япаласем:
3. Хушаматсем:
4. Ытти сӑмахсем:

*Ленинград, пароход, Данилов, Григорьев, библиотека, автобус, велосипед, Ульяновск, конституци, съезд, стахановец, комсомолец, миномёт, граната.*

***80-мӗш задача.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр, ***б, г, д з, о*** саспаллиллӗ сӑмахсене аялтан пӗр йӗрпе туртӑр. Вӗсене мӗнле сӑмахсенче ҫырнине асӑрхӑр.

Августӑн 18-мӗшӗ — Совет Союзӗнчи халӑхсен авиаци кунӗ. Совет Союзӗн геройӗсем Чкалов, Беляков, Байдуков, Громов, Юмашев, Данилин ку таранччен пулман вӗҫевсем турӗҫ. Вӗсем Мускавран Ҫурҫӗр полюсӗ урлӑ Америкӑна самолётпа вӗҫсе ҫитрӗҫ.

> *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсенче анчах ҫыраҫҫӗ.

# 10 §. Мăшăр сăмахсене çырасси.



Ача-пăча.



Выльăх-чĕрлĕх.

*81-мĕш задача.* Çак предложенисене вуласа тухăр, унтан çырса илĕр.

Ĕне сĕт-çу парать. Выльăх-чĕрлĕх пулсан, аш-какай та пулать. Вăрман—уй-хир хӳтлĕхĕ. Кайăк-кĕшĕк — хурт-кăпшанкăн тăшманĕ. Ача-пăча урамра вылять. Пирĕн кил-çурт таса.

*82-мĕш задача.* Çак мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

Сӳс-кантăр, урлă-пирлĕ, кукăр-макăр, унта-кунта, çăкăр-тăвар, пир-авăр, йăлтăр-ялтăр, кĕпе-йĕм, йĕпе-сапа, хĕç-пăшал, савăт-сапа, инкек-синкек, пуçлă-вĕçлĕ.

> ***Сӳс-кантăр, урлă-пирлĕ, кукăр-макăр*** йышши сăмахсене мăшăр сăмахсем теççĕ. Мăшăр сăмахсене кĕске йĕрпе пĕрлештерсе çыраççĕ.

*83-мĕш задача.* Çак предложенисенче тĕл пулакан мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

Совет Союзĕн çĕрĕ-шывĕ пуян. Кайăк ферминче чăх-чĕп, хур-кăвакал усраççĕ. Пирĕн колхозра утмăл-çитмĕл кил. Кашни килĕ хаçат-журнал çырăнса илет. Пирĕн енче ялăн ана-çаран аслă.

*84-мĕш задача.* Çакăнта çырнă предложенисенче тĕл пулакан мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

Хăш чух тăман тапранса каять, айĕн-çийĕн вĕçтерет, çулсене шăла-шăла лартать. Уй-хире, çырма-çатрана юр вĕçтерсе тултарать. Çумăр пăт-пат ӳккелет. Йытăсем лăй-лай харкашаççĕ. Ирхине пит-куçа çăвăр. Çулла вăрманта тĕрлĕрен хурт-кăпшанкă пит нумай.

*85-мĕш задача.* Хăвăр шухăшласа предложенисем тăвăр. Предложенисенче çакăнта çырнă мăшăр сăмахсем пулччăр.

Тĕслĕх: Хирте кăçал тырă-пулă лайăх пулчĕ.

Тырă-пулă, вăрă-хурах, чĕлхе-çăвар, кĕнеке-хаçат, йăлтăр ялтăр, пиллĕк-улттă.

*86-мĕш задача.* Хăвăртан шухăшласа мăшăр сăмахлă виçĕ предложени çырăр.

# 11 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетесси.

*87-мĕш задача.* Çак статьяна вуласа тухăр. Унтан кашни предложенинче миçе сăмах иккенне калăр.

## Çуркунне вăрманта.

Ачасемпе вăрмана кайрăмăр. Ĕнер анчах çумăр çăватчĕ. Паян хĕвел ытла та савса пăхать. Ăшă, лăпкă çил пурне те ачашлать. Вăрмана часах çитрĕмĕр. Унта кайăк сассисем янăраççĕ. Йывăççен çулçисем сарăлнă. Çĕмĕрт çурăлнă, чечекĕсем шап-шурă. Уçланкăсенче курăксем ешереççĕ, чечексем çурăлаççĕ. Чечексем çинче пыл хурчĕсем вĕçеççĕ. Вĕсем пыл тума тутлă сĕтек пуçтараççĕ.

*88-мĕш задача.* Çак сăмахсене тетрадьсем çине çырса илĕр. ***Б, г, д, ж, з, ц, щ, о, ф*** саспаллисене пĕр йĕрпе аялтан туртăр.

Октябрь, революци, фабрика, завод, рабочи, коммунист, республика, пароход, журнал, грузовик, бомбардировщик.

*89-мĕш задача.* Çак сăвва вуласа тухăр. Сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн татса вулăр. Сăввине пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Конькипе.

Вĕçсе пырап конькипе—
Хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чар чĕрсе пынипе
Пăр çийĕ пит йĕрлĕ.

Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
Йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса,
Савăнса ярнатпăр.

Астумасăр хăш чухне
Такăнса ӳкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех
Çиçĕм пек вĕçетпĕр.

*90-мĕш задача.* Çак предложенисене çырса илĕр. Уçă сасăсене аялтан туртăр.

Ир тăрсассăн, пит çусассăн, кĕç чупатпăр шкулалла. Шкула çитнĕ, кĕнеке тытнă, вĕренетпĕр малалла. Тăнкăр-танкăр танкăртатрĕ параппан сасси, ян-янах янăрарĕ пионер юрри.

*91-мĕш задача.* Çак статьяна çырса илĕр. Йĕркерен йĕркене каçнă чухне сăмахсене тĕрĕс сыпăкласа каçарăр.

## Пирĕн ял.

Пирĕн ял çулран çулах чаплăланса пырать. Унта çĕнĕ çуртсем, клуб, больница,

шкул турӗҫ. Ҫырма хӗрӗнче питӗ пысӑк сад ӳстерчӗҫ. Ялтан пур еннелле те тикӗс ҫулсем хыврӗҫ. Ял витӗр час-часах автомобильсем иртсе ҫӳреҫҫӗ.

***92-мӗш задача.*** Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. Ҫырса илнӗ чухне хытӑ уҫӑ сасӑсене пӗр йӗрпе, ҫемҫе уҫӑ сасӑсене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр. Сӑввине пӑхмасӑр калама вӗренӗр.

## Хӗвелӗмӗр Сталин.

Ҫут хӗвелӗмӗрҫӗм—Сталин,
Аслӑ тусӑмӑр, ҫулпуҫ!
Телее куратпӑр халӗ
Ӗнтӗ эпир,
Эпир ӗнтӗ куҫран куҫ.

Ҫут хӗвелӗмӗрҫӗм—Сталин!
Эс ҫутатӑн ӗмӗрех.
Савӑнать-ҫке пӗтӗм халӑх,
Патӑн ырлӑх,
Ырлӑх патӑн эс пире.

Тавтапуҫ, юратнӑ Сталин,
Тавтапуҫ сана, мухтав!
Ҫут хӗвелӗмӗрҫӗм—Сталин,
Эсӗ—юрӑ,
Юрӑ эсӗ, эс—ялав!

## ТУПМАЛЛИ.


*Стр.*

1 §. Малтанхи хăнăхтарусем . . . . . . . . . . . . . 3
2 §. Предложени . . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
3 §. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ . . . . . . 15
4 §. Сăмахсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси . 18
5 §. Сасă. Алфавит . . . . . . . . . . . . . . . . 22
6 §. Сăмах сыпăкĕсем. Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
7 §. Хытă тата çемçе уçă сасăсем . . . . . . . . . 28
8 §. Çемçетмелли паллă (ь) çырасси . . . . . . . . 29
9 §. Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ саспаллисене çырасси . 33
10 §. Мăшăр сăмахсене çырасси . . . . . . . . . . . 35
11 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетесси . . . . . . . 37



Редактор Н. Т. Васянка

НТ 000371. Под. к печати 14/III-44 г. Объем 2,5 п.л. Тираж 30.000 экз. Заказ 366

1-я типография Управления полиграфпром. при СНК ЧАССР. г. Чебоксары
Дом печати

Цена 45 коп.

С. С. ЯГУНОВ

# ГРАММАТИКА ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА

ЧАСТЬ I

ГОСИЗДАТ ЧАССР
ЧЕБОКСАРЫ—1944